Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен
тата архив ĕçĕн министерстви
Чăваш Республикин наци библиотеки
«Чăваш кĕнеки» центрĕ

# «МАНĂН ПĔТĔМ ПУРНĂÇĂМ – СĂМАХ»

(чăваш халăх çыравçи Д. В. Гордеев
çуралнăранпа 80 çул çитнине
халалланă литература каçĕн сценарийĕ)



Шупашкар
2018

ББК 83.39(=Чув)6-8
М 23

Редакци совечĕ: М. В. Андрюшкина
А. В. Аверкиева
Н. Т. Егорова
Т. А. Николаева
Е. Н. Федотова

Каларăмшăн яваплă
Г. П. Соловьева

«Манăн пĕтĕм пурнăçăм – сăмах» : (чăваш халăх çыравçи Д. В. Гордеев çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă литература касĕн сценарийĕ) / Чăваш Республикин наци библиотеки ; О. Н. Тимофеева хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2018. – 16 с.

Компьютерпа пичетлекенĕ: О. Н. Тимофеева
Версткăлаканĕ: Е. Н. Федотова

Оригинал-макет изготовлен и отпечатан в отделе «Сервис-центр»
БУ «Национальная библиотека Чувашской Республики»
Минкультуры Чувашии
428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 15
Тел.: (8352) 23-02-17, доб. 160
E-mail: publib@cbx.ru; веб-сайт: www.nbchr.ru
Тираж 30 экз.

© Чăваш Республикин наци библиотеки, 2018

**«Манăн пĕтĕм пурнăçăм – сăмах»**

(чăваш халăх çыравçи Д. В. Гордеев çуралнăранпа
80 çул çитнине халалланă литература каçĕн сценарийĕ)

**Хутшăнакансем:**
1-мĕш ертсе пыракан
2-мĕш ертсе пыракан
Сăвă вулакан
Артистсем

*Залра Денис Гордеев пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе çыхăннă кĕнеке куравне йĕркеленĕ. Залра çурма тĕттĕм. Экран çинче çакнашкал видео пуçланать: вĕçĕ-хĕррисĕр мăнаçлă тинĕс саркаланса юхать, унăн вылянчăк хумĕсем çинче хĕвел шевли çиçет. Экран çинчи пулăмсене сасăлатнă: çил вĕрни, хумсен сасси. Тинĕс сасси ерипен чакса пырать, пĕр кана шăп-шăпăрт пулать, унтан таçтан аякран илемлĕ чăваш халăх кĕвви янраса каять, ача-пăча хаваслă кулни-çуйхашни илтĕнет. Пĕри: «Тинĕс, кам маларах? Ме, тыт!..», тепри: «Эй, Тинĕс, эп кунта-а-а!...». Ачасен сассисем майпенрех те майпенрех илтĕнеççĕ, унтан пач! çухалаççĕ. Залра çутă çутăлать. Экран çинче ĕлĕкхи чăваш ялĕ тухса тăрать. Сценăн пĕр енчен 1-мĕш ертсе пыракан тухать.*

**1-мĕш ертсе пыракан**: Ашшĕпе амăшĕ ăна Тинĕс тесе ят панă. Унăн ачалăхĕ çăмăл пулман. Пулма та пултарайман. Вăл 1938 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнче Кĕтне шывĕ хĕрринче вырнаçнă Асанкасси ялĕнче çуралнă. «Пирĕн ăрăва «вăрçă ачисем» теме хăнăхнă. Вĕсен ачалахĕпе яшлăхне вăрçă синкерĕ татса кайнă. Çавăнпа ку ăрăва инкеклĕ ăру тени тĕрĕсрех», – çапла çырса хăварать çулсем иртнĕçемĕн хăйĕн ачалăхне аса илсе чăваш халăх çыравçи Денис Гордеев.

Паянхи сăмахăмăр çак пултаруллă, хастар чăваш ывăлĕ çинчен пулĕ, кăçал вăл çуралнăранпа 80 çул çитрĕ.

*(Сценăн тепĕр енчен 2-мĕш ертсе пыракан тухать).*

**2-мĕш ертсе пыракан**: Денис Викторович Гордеев чăваш литература анинче чи ăнăçлă ĕçлекенсенчен пĕри, унăн пултарулăхĕ нумай енлĕ: вăл сăвăç, публицист, журналист, ăста прозаик. СССР Писателĕсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Куçма Турхан ячĕллĕ преми лауреачĕ.

**1-мĕш ертсе пыракан**: Тинĕс ашшĕ Виктор Гордеевич малтанхи арăмĕ вилсен виçĕ ачапа тăрса юлнă. Тинĕс амăшĕ Анна та тăлăх арăм пулнă, пĕр ывăлпа пурăннă. Шăпа Аннапа Виктора пĕрлештернĕ. Çĕнĕ çемьере часах тепĕр тăватă ача çуралнă, виççĕмĕшĕ – Тинĕс. Вĕсен килĕнче харкашу-тĕркешӳ нихçан та пулман. Ашшĕ-амăшĕ ачисем çине алă çĕклемен, сивĕ сăмах каласа кӳрентермен, пĕчĕкренех ĕçе юратма вĕрентнĕ. Арçынсем урапа-çуна тунă, хĕрарăмсем чăпта çапнă, ачасем çăпата хуçнă.

**2-мĕш ертсе пыракан**: Çырас туртăм Тинĕсĕн шкулта чухнех палăрнă. Чăваш литературине вĕрентекен Гурий Александрович Титов уроксенче ачасене сăвă çырма вĕрентнĕ, пĕр-вĕçĕмсĕр хавхалантарса тăнă. Çичĕ класс пĕтерсен Тинĕс столяр ĕçне вĕренме эртеле кĕнĕ. Кăшт вăхăт иртсен Каçалти вăтам шкулта пĕлӳ пухма тытăннă. 1956 çулта Каçал ен хаçатĕнче Денис Гордеевăн пĕрремĕш сăвви кун çути курать, çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ çыравçăн пултарулăх çулĕ, йĕрке хыççăн йĕрке шăрçаланать, çĕнĕрен те çĕнĕ хайлавсем çуралаççĕ.

**Сăвă вулакан**:

**Пурнăç сукмакĕ**

Вун пиллĕкре, имшер пӳ-силлĕ.
Мана каларĕç: «Ак верстак».
Çак пулчĕ пурнăçăн пехилĕ,
Мăн çул çине тухан сукмак.

Ура айне пукан лартаççĕ
Çулталăк аслăрах туссем.
Пăта ыйтсан, хăма параççĕ,
Хăма ыйтсан – вĕт пăтасем.

Шӳте шӳт вырăннех эп картнă,
Пуçа усса чун хĕнемен.
Шакканă, тăрăшнă, якатнă,
Алла хистенĕ ĕçлеме.

Йышра йышпа пулма вĕреннĕ,
Хам ĕçĕм тунă ун ĕçне…
Яш вĕрене çулçин кĕренĕ
Ӳкетчĕ чӳрече çине.

– Сыв пул, – айшатăн пăшăлтатрĕç
Шӳт ăстисем, цехри туссем.
Мана института ăсатрĕç.
Асрах паян çав самантсем.

Яш чух такам та ăрăскаллă.
Пит çăмăл-и чăн çул тупма?
Сан пултăр пурнăçăн халалĕ,
Мăн çул çине тухан сукмак.

**1-мĕш ертсе пыракан**: И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетĕнче 2-мĕш курсра вĕреннĕ чухне Денис Гордеева литература ушкăнĕн старостине суйланă, ун чухнех вăл «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнекере пичетленме пуçланă. Виççĕмĕш курсра пултаруллă яш Вăрнар районĕнчи Нурăсра ача çуртĕнче, унтан Комсомольски районĕн хаçатĕнче вăй хунă. Мускав

облаҫӗнчи Наро-Фоминскра ҫар хӗсметӗнче тӑнӑ хушӑра та ҫыравҫӑ калеме пӑрахман, «На боевом посту» хаҫат валли хыпар-хӑнар, тӗрлӗ очерксем ҫырса тӑнӑ.

**Сӑвӑ вулакан**:

**«Чӗлкӗм куҫ хупмасӑр ҫӗр ҫӗрлерӗм…»**

Чӗлкӗм куҫ хупмасӑр ҫӗр ҫӗрлерӗм.
Тухӑҫра шевле ачаш ҫиҫсе
Йӑлтӑрти ука тӗрри тӗрлерӗ
Йӑшнӑ, кӗрпеленнӗ юр ҫинче.
Тӳпене ракетӑсем кармашнӑ,
Ҫӗкленмешкӗн хатӗр самантрах.
Ҫӗрӗпех вӗсем мире сыхланӑ,
Ҫавӑнпа тӳлек ир таврара.

**2-мӗш ертсе пыракан**: Виҫӗ ҫул иртсен салтак тӑван ене таврӑннӑ, тӗрлӗ ҫулсенче Муркаш район хаҫачӗн редакторӗнче, «Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн пай пуҫлӑхӗнче, Чӑваш кӗнеке издательствинче, СССР Литфончӗн Чӑваш уйрӑмӗнче, «Тӑван Атӑл» журналта ӗҫленӗ. 2008 ҫулта Денис Гордеев Чӑваш халӑх ҫыравҫи сумлӑ ята тивӗҫнӗ.

**1-мӗш ертсе пыракан**: Чӑваш литературинче Денис Гордеев чи сумлӑ прозаиксенчен пӗри шутланать. Вӑл – пичетленнӗ виҫӗ роман, вӑтӑр ытла повесть, ик ҫӗре яхӑн калав, новелла, ик ҫӗр юмореска авторӗ. Паллӑрах кӗнекисене ҫаксене асӑнса хӑварма пулать: «Ӑшӑ ҫумӑр» (1975), «Хурӑнсар» (1978), «Ир такӑнсан» (1981), «Чи вӑрӑм кун» (1985), «Куккуклӑ сехет» (1988), «Акман ыраш» (1992), «Ҫурта кунӗ» (2000), «Ҫич ҫунатлӑ курак» (2002), «Хуп хушшинчи ҫылӑх» (2005), «Пӑсташ» (2005) тата ыттисем те.

Ҫыравҫӑн чӗлхи селӗм, чӗрӗ, вулакана ҫывӑх. Пуплевсем ансат та ҫаврӑнӑҫуллӑ. Ӳкерчӗксем пӗчӗк те витӗмлӗ. Денис Гордеев хайлавӗсем паянхи чӑваш литературин аталанӑ-

вĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсенчен кашниех вулакана тарăн шухăша ярать, пурнăçра тĕрĕс çулпа пыма, ыррипе усаллине уйăрма вĕрентет. Вăл вăхăт таппипе пыракан ăста, хăй калашле, пултарулăхĕнче «самана пусмăрне кĕрсе ӳкмен, пăчланман, ырă традицисене çухатман» çын.

**2-мĕш ертсе пыракан**: Калавĕсемпе повеçĕсенчи персонажсем чăн пурнăçран илнĕскерсем, хамăрпа юнашар пурăнакан çынсемех. Автор вĕсен шухăш-туйăмне, ĕçĕ-хĕлне, кăмăл-сипетне сăнарлă çырса кăтартать. «Эпĕ хамăн хăш-пĕр калав сюжечĕсене тĕлĕкре куратăп, çынсемпе калаçнă чух та çуралать е хаçатра вуласа пĕлетĕп. Пурнăç вăл хăй прототип», – тет çыравçă[1].

Гордеев çирĕп çын сăнарне пысăка хурать, ытларах чухне калавĕ-повеçĕ те халăх вĕрентĕвĕ, пĕрлĕх туйăмĕ, философилле шухăшлав ăнлавĕ çинче никĕсленет. Çын ĕçĕ-пуçĕ урлă, этемĕн чун, кăмăл, мораль, философилле ăнлану тăрăмĕ урлă çĕр-шывпа обществăн лару-тăрăвне сăнлани питĕ кăтартуллă. Унăн элтешлĕх (гражданла) туйăмĕ çирĕп[2].

**1-мĕш ертсе пыракан**: Денис Гордеев пичет ĕçĕнче те чылай вăй хучĕ. Хастар публицист хăйĕн статйисенче хуçалăх, экономика, политика, мораль, чĕлхе, вĕрентӳ, сывлăх тата ытти темăсене хускатрĕ. Унсăр пуçне çыравçă пултарулăхĕ куçарура лайăх палăрчĕ. Вăл пушкăртларан, вырăсларан, удмуртларан, тутарларан, осетинларан, украинларан тата ытти чĕлхесенчен нумай сăвă-калав ăста куçарса чăваш вулаканĕ патне çитерчĕ. Итлесе пăхсамăр Осети поэчĕ, осетин литературине тата литература чĕлхине пуçарса яраканĕ Коста Хетагуров чăвашла еплерех янăранине!

---

[1] Гордеев, Д. Манăн пĕтĕм пурлăхăм – сăмах / Д. Гордеев // Тантăш. – 2002. – 29 çурла (№ 35). – С. 8

[2] Станьял, В. П. Чăваш халăх çыравçи Денис Гордеев: пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕрленчĕкĕ / В. П. Станьял, Н. Н. Камышова. – Шупашкар: ЧПГĂИ. – 2013. – С. 17.

**Сăвă вулакан**:

**Чăн çул кăтарт!**

Ӳстереймерĕ хăйĕн ывăлне
Пехил парса атте-анне.
Тăван çĕр сиввĕн хăваларĕ.
Хевтесĕр тухрăм çын çине,
Тăманлă килчĕ çуркунне.
Çын ăшшине чĕрем туймарĕ.
Осети, манăçми тăван,
Эс тăлăх пуçăма манман.
Унтах, унтах мана чĕнетĕн.
Куççуль шарларĕ куçăмран,
Чĕре тухас пек кăкăртан, –
Пăр тусене курса килентĕм.
Ак килтĕм. Уçрăм алăка –
Хамран та кĕлмĕç халăха
Курса чуна çес суранларăм.
Сăнап тăван тавралăха –
Вăл путнă çуклăх-юрлăха.
Манпа ун пĕр шăпа – шутларăм.
Ăçта çут пуçлă, ăслă ар?
Пуласлăха кампа шырар?
Çынсем çаплах-и суккăр ларччăр?
Уастырджы![*] Ыр пихампар!
Халăхăма пĕтме ан пар,
Чăн çул кăтарт – куççем çуталччăр!

---

[*] Уастырджы – осетин мифологийĕнчи çул çӳревçĕсене çул кăтартакан ырă).

**2-мĕш ертсе пыракан:** Денис Гордеев кулăшпа питлев жанрĕсемпе те питĕ ăнăçлă ĕçлет. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра тăрăшнă чухнех çыравçă «Йĕплĕ çăмах» кĕтес валли кулăш калавĕсем, фельетонсемпе памфлетсем çырнă. Кулăш хайлавĕсем 1981 çулта «Ир такăнсан» кĕнекере пичетленсе тухнă. Сире Денис Гордеевăн «Пӳрнеккей» калавĕ тăрăх хатĕрленĕ инсценировкăна пăхма сĕнетпĕр.

## ПӲРНЕККЕЙ

(Денис Гордеевăн «Пӳрнеккей» калавĕ
тăрăх хатĕрленĕ инсценировка)

**Вылякансем:**

**Иван Николаевич** – вăтам çулсенчи кăшт мăнтăртарах арçын, пуçĕнче шлепке, плащ тăхăннă;

**Пӳрнеккей** – 60 çулсене çывхараса пынă хаваслă арçын, атă-пушмакçă.

*Хула урамĕ тăрăх Иван Николаевич утса пырать, аллинче чăматан. Сасартăк вăл такăнса каять, пĕр пушмакĕ çăварне карса пăрахать.*

**Иван Николаевич**: Мур илесшĕ! *(пушмака ун-кун çавăркаласа пăхать, сехет çине пăхса илет, ассăн сывласа илет, инçех мар «Атă-пушмак юсакан мастерской» тесе çырнине курсан савăнса каять, хыпаланса унта кĕрсе каять)*.

*Атă-пушмак юсакан мастерскойĕнче. Пукан çинче Пӳрнеккей саркаланса ларать, пĕр аллинче – кофе курки, тепринче – журнал.*

**Иван Николаевич**: Ырă кун пултăр!

**Пӳрнеккей** *(сиксе тăрать)*: О-о! Салам-салам! Ларăр. Мĕн çăмăлпаччĕ, ырă çыннăм?

**Иван Николаевич**: Акă, пушмак çурăлса кайрĕ.

**Пӳрнеккей**: А? Пулать çул çинче кун пек инкек. Ларăр, канăр. Самантрах пушмакăр хатĕр пулĕ. Çĕннинчен те лайăхрах, универмагра туяннинчен те хӳхĕмрех. Ураран хывас килмĕ. *(Иван Николаевича «Капкăн» журнал тыттарать.)* Кичем пуласран «Капкăн» сиркелĕр. Иртнĕ уйăхра пĕр клиент парса хăварнăччĕ. Ай, эсир пушмакăра хывма та тытăнман-и? Хывăр, тусанне шăлкалăр.

*(Иван Николаевич пушмакне хывса тусанне шăлать).*

**Иван Николаевич**: Мĕн чухлĕ тӳлемелле пулать вара?
**Пӳрнеккей** *(пушмакне алла илет, çавăркаласа пăхать)*: Тӳлеме ĕлкĕрĕр-ха. Ĕçне тусан та. Унтан-кунтан пăта çапсан, паçăрах каларăм, çĕннинчен те хӳхĕмрех пулĕ. (*Иван Николаевич сехет çине пăхса илет).* Мĕн, васкатăр-им? Сехет çине вĕçрен пăхатăр?

**Иван Николаевич**: Поезд тепĕр çур сехетрен.

**Пӳрнеккей**: Ах, поезд çине ĕлкĕрмелле? Самантрах, туххăмрах, самантрах. Пирĕн ĕçĕ çапларах – çап пăтине ытларах… Трам-трам…

*(Юрла-юрла атă-пушмакçă лаптак пуçлă мăлатука алла илчĕ, ывăç çине сурчĕ, ĕçлеме хатĕрленчĕ, ĕç хатĕрĕсен вырăнтан вырăна куçарчĕ, пушмака тепĕр хут тытса «тĕпчерĕ»: турткаларĕ, пăрчĕ, тем виçкелерĕ, унтан-кунтан шаккаларĕ, саппун аркипе шăлса илчĕ те ăна шĕвĕр пӳрнипе тĕллерĕ).*

**Пӳрнеккей:** Ĕçĕ те çук кунта. Самантрах, туххăмрах, наччасрах…

*(Пӳрнеккей каллех ĕçе тытăнать. Иван Николаевич пĕр вĕçĕмсĕр сехет çине пăха-пăха илет, канăçсăрланма пуçлать).*

**Пӳрнеккей**: Самантрах… *(Шаккать, шăлать, ĕç хатĕрĕсене куçарать, пуçне хыçкаласа илет, сĕтел патне пырса пĕр-ик сыпкăм кофе ĕçет. Хăй васкамасть. Иван Николаевич ура çине сиксе тăрать, унталла-кунталла уткалама пуçлать, сехет çине пăхать).*

**Пӳрнеккей**: Ёлкĕретпĕр, ёлкĕретпĕр…

*(Шак-шак! Пӳрнеккей шаккама чарăнать, ура çине тăрать. Иван Николаевич савăнсах каять. Пӳрнеккей пӳлĕм тавра çич-сакăр хут утса çаврăннă хыççăн каллех ларать, шаккама пуçлать).*

**Пӳрнеккей** *(шаккама чарăнса пысăк пӳрнине кăтартать)*: Ак, çакă пӳрне, атăçă пӳрни, пĕрре те çынсенни пек мар. Куратăн пулĕ – лапчăк вăл. Ун çинчен йăлтах пĕлес пулсан? Мĕн-мĕн кăна курман ĕнтĕ вăл? Ача чухне, ас тăватăпха, атпри[1] пек шĕвĕрччĕ вăл. Ялан ăçта та пулин тăрăнатчĕ. Анна вăрçатчĕ: «Пӳрнӳне те пуçтараймастăн!» Кĕсъене чиксе çӳрес çук вĕт ăна. Ха-ха! Çавăнпаах мана Пӳрнеккей тесе чĕнетчĕç. Кӳренмен эпĕ уншăн. Ӳсе киле вара ку пӳрнене пула мĕн инкек тӳсмен-ши? Йытă çыртса илчĕ. Тӳрленчĕ. Арăм çыртса суранлатрĕ. Сипленчĕ. Пĕринче тата, самаях ӳсĕр чухне, çак пӳрненех-çке, урăххине мар, сиксе вĕрекен сăмала ăшне персе чикнĕ. Тепĕр кун чăтма çук ыратать. Çынсем кулаççĕ. Имĕш, ӳсĕрпе паттăрланнă иккен. Ун чух час тӳрленмерĕ хăй. Ак, нумаях пулмасть ăна атпăрипе чиксе шăтартăм. Тĕл пулать-çке мĕскĕн пӳрне тĕллĕн. Пĕчĕк пулсан та, чăтать хăй… *(Иван Николаевич ниçта кайса кĕрейменнипе тапăртатма пуçлать).* Васкатăр-и? Пулчĕ ĕнтĕ, пулчĕ! Тепре шак шаккатпăр та тăхăнса яратпăр. Çапла-и, ырă çыннăм? Çĕннинчен те хӳхĕмрех!

[1] Атпри (аптăри е атпăри – «шило» тенине пĕлтерет).

**Иван Николаевич** *(пӳлсе)*: Мӗн чухлӗ тӳлемелле?

**Пӳрнеккей**: Ан васка, ӗҫне вӗҫлер. *(Шаккать)* Акӑ, акӑ, пулчӗ сирӗн пушмакӑр, ҫӗннинчен те лайӑхрах, лавккара туяннинчен те хӳхӗмрех.

**Иван Николаевич** *(тарӑхса)*: Мӗн чухлӗ тӳлемелле, тетӗп? Пӗр тенкӗ ҫитет-и?

**Пӳрнеккей**: Ан васка-ха, ан васка!

**Иван Николаевич**: Поезд каясси вунӑ минут ҫеҫ юлчӗ! Тенкӗ ҫурӑ ҫитет-и?

**Пӳрнеккей**: Ан васка-ха. *(Пӳрнеккей пукан ҫине вырнаҫса ларать, каллех пӳрнине тӑсса кӑтартать)*. Ак ҫак лапчӑк пӳрне, малтан вӑл шӗвӗр пӳрнех пулнӑ, пӗринче…

**Иван Николаевич** *(кӑшкӑрнӑ пек)*: Икӗ тенкӗ ҫитет-и?!

**Пӳрнеккей** *(ним те пулман пек)*: Ҫапла ҫав, ҫак лапчӑк пӳрне, малтан шӗвӗр пулнӑскер…

**Иван Николаевич** *(кӑшкӑрса)*: Виҫӗ тенкӗ!!! Ҫитет-и?! *(Атӑҫӑ чӗрҫийӗ ҫине хут укҫа пӑрахать, карӑннӑ ҫӑварлӑ пушмакне каялла туртса илет)*.

**Пӳрнеккей**: Кулӑшла калаймарӑм-и-мӗн? Халиччен ман патран кулмасӑр тухса каякан пулманччӗ-ҫке.

*(Алӑк шалтлатса хупӑнать. Атӑҫӑ юрӑ ӗнӗрлесе пукан ҫине кайса ларать та журнал уҫкалама тытӑнать, унтан сцена ҫинчи картина хытса тӑрать. Инсценировка вӗҫленет. Илемлӗ кӗвӗ шӑппӑн янраса каять. Ертсе пыракан тухать).*

**1-мӗш ертсе пыракан**: Чӑваш литератури пултаруллӑ прозаиксемпе пуян: Ефрем Еллиев, Леонид Агаков, Марфа Трубина, Хветӗр Уяр, Никифор Мранька, Юрий Скворцов… Ҫак рете халькхи саманари ҫыравҫӑсем тивӗҫлӗн тӑсаҫҫӗ, вӑл шутра Денис Гордеев та. Унӑн хайлавӗсенче вулакан пурнӑҫ вӗресе тӑнине туять, вӑхӑт улшӑннине сисет, ҫӗнӗлле шухӑш-

лакан çынсем пуррине курать. Писателе хумхантаракан ыйтусем йышлă: ашшĕ-амăшĕпе ачисем хушшинчи çыхăну, çыннăн пурнăçри вырăнĕ, кун-çулĕ, пуласлăхĕ, пурнăçри тĕрĕсмарлăх, танмарлăх. Кашни çын шăпи тĕрлĕрен, нушипе савăнăçĕ те пĕр пек килмеççĕ. Денис Гордеев илемлĕх мелĕсемпе анлă усă курать, унăн чĕлхи типтерлĕ, çыпăçуллă, янравлă, халăх калаçăвĕнчи пек.

**2-мĕш ертсе пыракан**: Денис Гордеев хайлавĕсем чăваш литературин ылтăн çӳпçине ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлчĕç, унăн калавĕ-повеçне шкул ачисем те, студентсем те, аслисем те юратса вулаççĕ, литературоведсем, ăсчахсем çыравçă пултарулăхне тимлесе тĕпчеççĕ, тивĕçлĕ хак параççĕ. Денис Гордеев çутă çăлтăрĕ литература уçлăхĕнче нихăçан та сӳнмĕ.

*(Уява пĕр-пĕр илемлĕ юрăпа вĕçлеме пулать).*

**1-мĕш ертсе пыракан**: Çакăн пек хавхаланулла кăмăлпа эпир паян Денис Гордеева халалланă литература каçне вĕçлетпĕр. Сывлăхлă пулăр, кĕнекепе туслă пулăр!



# УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

## Д. В. Гордеев кĕнекисем

Акман ыраш : повеçсем, калавсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1991. – 256 с.

Аналалла-тăвалла : повесть / Денис Гордеев. – Шупашкар : КПСС Чăваш обкомĕн издательстви, 1989. – 62 с. : портр. – («Ялав» библиотеки ; 3 (75) кăларăм).

Ăшă çумăр : сăвăсем : шкул çулне çитмен ачасем валли / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1975. – 29 с.

Ир такăнсан : кулăшла калавсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1981. – 88 с.

Карăк туйĕ : повеçсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1986. – 176 с.

Куккуклă сехет : калавсемпе повеçсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1988. – 352 с.

Макумба ташши : повеçпе калавсем : [аслă çулхи шкул ачисем валли] / Денис Гордеев ; [Т. И. Немцева ӳнерçĕ]. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2012. – 190, [2] с.

Пăсташ : роман / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2005. – 319 с.

Петюкпа мăлатук : сăвăсем / Денис Гордеев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1989. – 24 с.

Çеçенхир çилĕ : повеçпе калавсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1976. – 160 с.

Çич çунатлă курак : повеçсем / Денис Гордеев ; ӳнерçи В. Н. Гончаров. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2002. – 270 с.

Çурта кунĕ : калавсемпе повеçсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2000. – 334 с.

Тĕрленĕ кĕпе : повеçпе калавсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1983. – 200 с.

Хĕрес хывнă хĕвел : роман, повеçсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2008. – 414, [2] с.

Хуп хушшинчи çылăх : повеçпе роман / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2004. – 367 с.

Хурăнсар : сăвăсем / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1978. – 70 с.

Чи вăрăм кун : калавсемпе повесть / Денис Гордеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1985. – 208 с.

## Пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен

Станьял, В. П. Чăваш халăх çыравçи Денис Гордеев : пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕрленчĕкĕ / В. П. Станьял, Н. Н. Камышова. – Шупашкар : ЧПГĂИ, 2013. – 74, [1] с.

* * *

Австрийская, О. Ачи хамăн та, ăсĕ хăйĕн / О. Австрийская // Тантăш. – 2012. – 7 çĕртме (№ 22). – С. 9.

Гордеев, Д. В. «Суяс пур-тăк, пĕттĕр пуçăм...» : [çыравçăпа калаçни / калаçаканĕ Л. Сачкова] // Тăван Ен (Шупашкар районĕ). – 2010. – 27 çурла-2 авăн. – С. 6.

Грияннская, Л. Тĕлпулура – паллă çыравçă / Л. Грияннская // Каçал ен (Комсомольски районĕ). – 2008. – 1 пуш. – С. 3.

Масар çинче çуралнă хайлав // Самант. – 2005. – № 9. – С. 21.

Писателе хисепленĕ // Каçал ен. – 2000. – 4 юпа.

Смирнова, Н. Юбиляр ячĕпе – ăшă сăмахсем / Н. Смирнова // Хыпар. – 2013. – 20 çĕртме. – С. 1.

Степанова, Н. И. Д. Гордеевăн «Çурта кунĕ» кĕнекинчи калавсем / Н. И. Степанова, И. А. Петрова // Вестн. Чуваш. гос. пед. ун-та им. И. Я. Яковлева. – 2005. – № 3 (46). – С. 100-104.

Уткин, Г. Татăклă сăмах / Г. Уткин // Хыпар. – 2013. – 15 çĕртме. – С. 11 : сăн ӳкерчĕк ; çавах // Уткин, Г. Ултă портрет : очерксем / Г. Уткин. – Шупашкар, 2013. – Иккĕмĕш кĕнеке. – С. 3-8.

Хисеплĕ ят панă // Каçал ен. – 2008. – 1 ноябрь.

Яндрова, Е. Çыравçă сăмахĕ хăватлă, сумлă / Е. Яндрова // Тантăш. – 2010. – 28 юпа (№ 44). – С. 4.

* * *

Абрамов, В. А. Гордеев Денис Викторович / В. А. Абрамов // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2006. – Т. 1: А-Е. – С. 427.

Афанасьев, П. Гордеев Денис Викторович // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 93-94.

Гордеев, Д. Возраст предварительных итогов : [интервью с писателем / записал В. Петров // Совет. Чувашия. – 1998. – 4 июня.

Гордеев Денис Викторович // Энциклопедия чувашской журналистики и печати. – Чебоксары, 2014. – С. 88-89.

Гордеева, С. Д. Денис Викторович Гордеев: 1938. Свет родного слова / С. Д. Гордеева // Писатели. – Чебоксары, 2008. – С. 97-104 : фот. – (Библиотека Президента Чувашской Республики ; т. 6).

Григорьев, В. Я. Гордеев Денис Викторович / В. Я. Григорьев, Г. А. Уткин // Энциклопедия Комсомольского района. – Чебоксары, 2009. – С. 146.

Денисова, С. Родное село встречает писателя / С. Денисова // Чӑваш ен. – 1998. – 20-27 июня (№ 24). – С. 7.

Мышкина, А. Ф. Художественно-философские взгляды писателя на духовные и этнические ценности / А. Ф. Мышкина, И. И. Гафурова // Филолог. науки. Вопросы теории и практики. – 2014. – № 9, ч. 1 (39). – С. 115-118.

Тимуков, А. Н. Гордеев Денис Викторович / А. Н. Тимуков // Краткая чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2001. – С. 126.

Ялгир, П. Гордеев Денис Викторович // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С. 28.

## Интернет-ресурссем

Звуки моря, шум прибоя, волны [Электронный ресурс] // YouTube. – Режим доступа: https://www.youtube.com/watch?v=RZegRdNvwIE&t=14s. – (Дата обращения: 25.05.2018).

